Ĕçри маттурсем – ыттисемшĕн тĕслĕх

Чунтан юратса, малашлăха шанса

«Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕ районта тăнăç аталанса пыракан ял хуçалăх предприятийĕсенчен пĕри.

Сĕт комплексĕнче 3 çул дояркăра вăй хуракан Зоя Николаевна Васильева **(сăн ўкерчĕкре)** вылькăх-чĕрлĕх отраслĕшĕн ют çын мар: вунă çул вăл çак отрасльте. Галина Пантелеймоновна Ковалевапа пĕрле вĕсем пĕр ушкăнра 51 ĕне сăваççĕ. Тăрăшуллă хĕрарăмсем çулсеренех пысăк кăтартупа савăнтараççĕ. Юлашки 3 çул хушшинче вĕсен вăтам кăтартăвĕ яланах 5000 килограма çывăх пулчĕ. «Ушкăнра талăксерен 20-26-шар килограмм сĕт антаракан ĕнесем пулни пирĕн çĕнĕ чикĕсем пуррине кăтартать», – тет Зоя Николаевна.

– Вылькăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлесси – пирĕн çемье династийĕ, – терĕ сĕтпе тулнă витрене бидона пушатнă май 1983 çултанпа хăй дояркăра ĕçленине кăмăллăн палăртса «Оринино» хуçалăхри ĕне сăвакан Галина Пантелеймоновна Ковалева. Династи тенĕрен, унăн амăшĕ Вера Германовна Белкова нумай çул çак хуçалăхра дояркăра вăй хунă, тивĕçлĕ канăва сысна ферминче ĕçлесе тухнă. Ачаллах амăшне пулăшма фермăна çўренĕ Галина 7-мĕш класс хыççăнах çуллахи каникул вăхăтĕнче амăшĕпе пĕрле ĕçлекен дояркăсене отпуска ярса аслисен ĕçне пурнăçланă.

Хастар хĕрарăм пĕрре мар ĕнесене машинăпа сăвакан операторсен районта ирттерекен конкурссенче çĕнтернĕ, район чысне республикăра хўтĕленĕ. Паян вăл хĕрпе ывăл ўстерет. Вĕсене те выльăх-чĕрлĕхе юратма вĕрентет. Света куçăмсăр майпа выльăх тухтăрне вĕренни те çемьере ĕç династийĕ малалла тăсăлни пирки калать.

Пĕр ĕне пуçне 5 пинрен пуçласа 6 пин килограмм таран сĕт сунă çак дояркăсене иртнĕ çул пĕтĕмлетĕвĕпе Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн дипломĕсемпе тата укçан парнесем парса чыслани халĕ те куç умĕнче.

– Çĕннине тăтăш вĕренмеллине, ыранхи куна пăхса ĕçлемеллине, малашлăхшăн тăрăшмаллине пирĕнтен пурнăç ыйтать. Çакна эпир хамăр çинче туятпăр. Пирĕн ĕç хыçĕнче районăн, Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн экономикин аталанăвĕсем тăраççĕ, – терĕ кĕске калаçура «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн Патаккассинчи сĕт комплексĕн заведующийĕ Раиса Ананьевна Блинова. 31 çул выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче вăй хураканскер çак хушăра ĕне те сунă, техник-осеменаторта та ĕçленĕ, юлашки 7 çулне вара ферма коллективне ертсе пырать.



Хуçалăхра çеç мар, районта та ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăракан коллектив шаннă ĕçе чунтан юратса, малашлăха пăхса ĕçлет. Пĕлтĕр ушкăнри кашни ĕнерен 5399 килограмм сĕт сунă çак дояркăсем кăçалхи тăватă уйăхра та ўсĕм чиккине çухатман. Вĕсен ĕç кăтартăвĕ – 1900 килограмм, пĕлтĕрхинчен 127 килограмм нумайрах.

А. ПЕТРОВ.
Автор сăн ўкерчĕкĕ.

Çу уйăхĕн 31-мĕшĕ – Пирус туртма пăрахмалли пĕтĕм тĕнчери кун

«Турци кĕрĕкне çунтарас килмерĕ»

Çу уйăхĕн 31-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчерИ пируса йышăнмалла мар кун. Çакă ăнсăртран мар. Çынсем вилессин пĕлтерĕшлĕ иккĕмĕш сăлтавĕ шăпах пирус пулса тăрать. Тарăна кайнă çак сиенлĕ йăла çыннăн активлă пурнăçĕн чĕрĕк пайне пĕтерет. Пирус туртнине пула тĕнчере çуллен 5 миллион çын вăхăтсăр пурнăçран уйрăлать. Раççейпе илсен – 300 пине яхăн. Çаксем çинчен тата Муркаш райповĕ урлă район çыннисем иртнĕ çул 13 миллион та 280 пин тенкĕлĕх 1 миллион та 30 пин те 800 пачка пирус туянни пирки шутласа утрăм та эпĕ Н. Еропанов **(сăн ўкерчĕкре)** ертсе пыракан «Компьютерсем» салон еннелле. Муркаш райповĕ çумне Мăн Сĕнтĕрсене тата уйрăм предпринимательсен магазинĕсене хушсан... Ытарлăрах шутласан пирĕн çынсем иртнĕ çул 25 миллион тенкĕне яхăнлăх пирус мăкăрлантарнă. Çунтарнă çак укçана район территорийĕнче çурт-йĕр е ытти социаллă объектсем тума усă курнă пулсан, пирĕн пурнăç пĕр çулталăкрах тĕпрен улшăнмаллаччĕ. Анчах тĕллевсене «пĕтĕм тĕнчери экономика кризисĕ» таптарĕ: çурт тăваймарăмăр, çул сараймарăмăр, çĕнĕ спорт залĕ хута каяймарĕ...

Николай Васильевич Еропанов мана кăмăллăн кĕтсе илчĕ.

– Пирус туртман çынна кофе сĕнме кăмăллă, – йăл кулă парнелерĕ черетлĕ клиентăн ыйтăвĕсене татса панă хушăрах ман еннелле çаврăнса «Компьютерсем» салон ертўçи.

– Вăрттăнлăх тумăпăр. Хăçан пируспа туслашнă эсĕ тата епле хăтăлтăн çав сиенлĕ йăларан? Пирус тĕтĕмĕн серепинчен тухмалли утăма тума çăмăлли? Мĕн тўссе ирттерет кун пек чух пирус туртакан? – ыйтусемпе пуçăнтăм хамăн сăмахăма.

– Паян паракан çак пĕчĕк интервью пĕр çамрăка та пулин тĕрĕс çул суйласа илме пулăштăр тесе килĕшрĕм эпĕ сирĕнпе тĕл пулма. Чăваш ял хуçалăх институтĕнче «Ял хуçалăхне механизацилесси» факультетра вĕреннĕ чух 1991 çулта Мускава «ЗиЛ» автозавода практикăна кайсан юлташсем астарнине чăтайманнипе хăнăхрăм çак сиенлĕ йăлана. Киле таврăнсан анне вăрçрĕ, анчах... Çапла вара «хаклă» пируспа йĕркеленнĕ туслăх 10 çула тăсăлчĕ.

Лайăхах астăватăп, 2001 çулхи утă уйăхĕ. Ирлесе вăранса кайрăм та нимĕн çинчен шухăшламасăр ытти чухнехи пекех пирус шыратăп. Анчах çĕркаç пĕтнĕ пулнă вăл. Çавăн чухне пуçа вăрттăн шухăш пырса кĕчĕ: «Мĕн чуль укçа пĕтеретĕп-ха эпĕ çулталăкра пирус туртса?» Хам вăл вăхăтра перекет банкĕнче ĕçленĕскер тата хаклă йышши пируссене çеç туяннăскер ыйтăвăн хуравне хăвăрт тупрăм: Турцире туса кăларнă 10-12 пин тенкĕлĕх пĕр чаплă кĕрĕк! «Хаклă йышши кĕрĕк çунтармалăхах пуян-ши вара эпĕ?» ыйту çав самантра пирус туртас килнине «хупларĕ».

– Ку ыйту çине хуравĕ ансат-и? – тăсатăп калаçăва.

– Шăпах çак йывăрлăха çĕнейменни нушалантарать те чылай арçынна. Кунта компьютер çинчи пекех хăйĕн программи. Пирус туртма пăрахас тесен çав вăхăтра эрех ĕçмесĕр пурăнмалла. Ку пĕрремĕшĕ. Иккĕмĕшĕ. Малтанхи икĕ эрне йывăр вăхăт. Кунта, шўтлесерех каласан, малтанхи 1-2 кунне кĕтўре пĕччен çўремелле. Çывăхра туртакан çын ан пултăр. Çакăн чухне 2 эрне хушши кĕсьерен хĕвел çаврăнăшĕпе канфет ан тухтăр. Нервăсене лăплантарма вара çумра глицин таблетки пулни вырăнлă. Хăвна ямăх туйма пуçласан чĕлхе айне хунă глицин пăлханăва ирттерсе ярать. Хыççăнхи икĕ уйăхра юлташсемпе чух пирус туртас килет, тĕлĕкре те хăв туртни тĕлленет. Çак тапхăр та хыçа юлсан çеç ир тăрсан пирус пирки шутлани иртсе каять. Малти вырăна мăшăр, ачасемпе ырă ĕç тăвас шухăшсем тухаççĕ. Пурнăç илемне туйса илетĕн.

– Пирус туртмасан ўт хушăнать тенине мĕнле хаклатăр?

– Пушă вырăн ахаль юлмасть тенĕ пек кун пекки чăнах та пулма пултарать. Çитменлĕхе спортпа саплаштарни вырăнлă, – пулчĕ хурав. – Пурнăçра мĕн те пулин çĕнсе илес тесен хăш-пĕр сиенлĕ йăларан пăрăнма тивет. Пирус туртмастăп та çав вăхăта ĕç пирки шутласа çĕннине шыраса ирттеретĕп. Стреса ирттерме пирус туртатăп текенсене çав йывăрлăха туссемпе каласса е спорт снарячĕ патне пырса ирттерме сĕнетĕп – пулăшать. Наука çирĕплетнĕ ĕнтĕ, пирус туртма пăрахнă çыннăн организмĕ вăхăт иртсен пĕтĕмпех юсанса çитет, пĕрре те алла пирус тытман çыннăнни пек пулать. Кун пек чух пурнăç илемĕ куç тулли пулни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Манăн методикăпа кăсăкланакансене хам патăма каласăва пыма сĕнетĕп. Сўтсе явăпăр та пĕрлехи йышăну тăвăпăр.

А. БЕЛОВ калаçнă.

Милици хроникинчен

Йĕркене пăсаканăн явап тытмалла

Майăн 21-28-мĕшĕсенче районти шалти ĕçсен пайĕ «Быт» операци ирттерчĕ. Эрне хушши çемьесенче харкашакансене, пĕрмай эрех ĕçсе çўрекенсене, наркоманипе чирлисене, тĕрмесенчен условлă майпа срокчен ирĕке кăларнисене тата йĕркене пăснăшăн ирĕкрен хăтармасăр айăпланнисене, спиртлă шĕвек сутакансене тĕрĕслерĕмĕр.

Операци вăхăтĕнче йĕркене пăсакансене сахал мар тупса палăртрăмăр. Акă Çĕньял Апаш ялĕнчи Н. гражданин çемьере харкашу тухсан хăйĕн мăшăрне хĕнет. Пуçĕнчен упăшкин чышки пĕрре мар лекет хĕрарăма. Арçынна маларах та асăрхаттарни пулнă, тĕрĕслев срокĕ те иртменччĕ. Халĕ вара çак çын тĕлĕшпе РФ Уголовлă кодексĕн 116 статйипе килĕшўллĕн уголовлă ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Тата тепĕр икĕ тĕслĕх çинчен те асăнса хăварас килет. Вĕсем Чăваш Республикин 16 № Саккунне пăснипе çыхăннă. Елшик ялĕнчи П. гражданка хăйсен ялĕнчи арçыннах спирт пур шĕвек сутать. Çакнашкал шĕвексене ĕçсех нумай çыннăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлать. Апла пулин те çыннăн сывлăхĕ çинче укçа тăвас текенсем çук мар. Спиртлă шĕвек сутакана административ лă майпа явап тыттарнă. Кун пек тепĕр тĕслĕх Ярославкăра та пулчĕ. И. гражданка хăйсен ялĕнчи арçынна çур литр спирта 40 тенкĕпе сутнă. Ĕç каллех 16 № саккуна пăснипе çыхăннă. Çавăнпа та хĕрарăма явап тыттарнă.

Раççей Федерацийĕн Уголовлă кодексĕнче çемьесенче харкашакансем тĕлĕшпе те, тепĕр çынна хĕнекенсем тĕлĕшпе те (РФ УК 116 статйин 1 пайĕ), вĕлерессипе хăратакансене (УК 119 статйи) айăплама ирĕк паракан статьясем пур. Тепĕр çынна кўрентерекенсене (УК 130 статйи), асаплантаракансене (УК 117 статйи), çул çитменнисене йĕркене пăсма явăçтаракансене (УК 150 статйи) тата вĕсене обществăна хирĕç ĕç пурнăçлама явăçтаракансене (УК 151 статйи) те уголовлă майпа айăплаççĕ. Ашшĕ-амăшĕ ачисене хĕнени те айăпсăр юлма пултараймасть. Çапла ирсĕр хăтланакансене Уголовлă кодексăн 156 статйи кĕтет.

Çапла кулленхи пурнăçра тĕрлĕ майпа йĕркене пăснăшăн явапне саккун тăрăх тытмалла. Апла пулсан хамăрăн çынлăха çухатас марччĕ. Хамăра йĕркеллĕ тытасчĕ.

И. ПЕТРОВ,
районти шалти ĕçсен пайĕн милицин участокри уполномоченнăйсен уйрăмĕн пуçлăхĕ.

Райадминистрацире

Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕнчи 332 тата 333 № йышăнăвĕсемпе нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– **Валентина Георгиевна КИРПИЧНИКОВĂНА,** Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи вырăс чĕлхипе литература учительне;

– **Татьяна Семеновна СОРОКИНĂНА**, «Передовик» хуçалăхăн Хачăк салинчи сĕт-çу ферминчи выльăх пăхаканне;

– **Олег Юрьевич НИКОЛАЕВА**, районти тĕп больницăн рентгенлаборантне.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи майăн 5-мĕшĕнчи 366 йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн – **Вячеслав Кузьмич ГОРДЕЕВА**, Чуманкасси ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕн депутатне;

– халăх сыхлавĕн сферинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Лина Павловна ОГУРЦОВĂНА**, районти тĕп больницăн офтальмолог врачне.

Районти прокуратурăран

Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

Паянхи кăларăмра хаçат вулавçисен ыйтăвĕсем çине Муркаш район прокурорĕн заместителĕ, юстици советникĕ Юрий Мефодьевич СЕМЕНОВ хуравлать.

Асăрханăр, ултавçăсем!

Телевизорпа шанчăка кĕнĕ çынсем кăшт вăхăт иртсенех çĕнĕ пĕлĕш-юлташĕсене çаратни пирки час-часах пĕлтереççĕ. Кунашкал тĕслĕхсем пирĕн районта пур-и? Кун пирки прокуратура ĕçченĕсем мĕн калайраççĕ.

С. ИВАШКОВ, А. СТОЛЯРОВ.

Вулавçăсен пăшăрханăвне ăнланатăп. Инçетре кăна мар, пирĕн районта та кунашкал тĕслĕхсем пур. Пĕрре курсах «шанчăклă тус» тупнисем Муркаш Енре те шар кураççĕ.

2010 çулхи нарăс уйăхĕн 18-мĕшĕнче Хыркасси ялĕнчи Л. Сенькова хуçалăхне пырса кĕнĕ Л. Садык кил хуçипе шăкăл-шăкăл каласса шанăça кĕнĕ хыççăн кил хуçи хĕрарăмăнне 15 пин тенкĕ «йăкăртса» тухса каять. Телее вăл инçе тарайман, йĕрке хуралçисен аллине лекнĕ.

Ку ĕç тĕлĕшпе районти шалти ĕçсен пайĕнче уголовнăй ĕç пуçартăмăр. Калуга облаçĕнчи Малоярославец хулинче пурăнакан, тивĕçлĕ ĕç вырăнĕ çук 40 çулхи Лада Георгиевна Садык гражданкăна район сучĕ следстви пынă вăхăта ирĕкрен хăтарма йышăну кăларчĕ.

Суя удостоверени

Паян тĕрлĕ документсене килтен тухмасăрах хатĕрлеме пулать теççĕ, район прокуратурин аллинче кун пек ĕçсемшĕн пуçарнă уголовлă ĕçсем пур-и? Тата мĕнле ответ тытаççĕ çак йĕркене пăсакансем?

Н. СИДОРОВ.

Инкеке лекекенсене питĕ шел, анчах вĕсем çак çула пĕлсех суйласа илнĕшĕн вĕсене çирĕп айăплани ытлашши пулманни те куçкĕрет.

2009 çулхи раштав уйăхĕн 30-мĕшĕнче 15 сехет те 30 минутра «Мускав – Ĕпхў» автоçул çинче Нискасси тĕлĕнче çуллĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем Çĕнĕ çул кĕтсе илме васкакан ВАЗ-21093 автомашинăна документсем тĕрĕслеме чараççĕ. Тĕрĕслев вăхăтĕнче Воткинск хулинче пурăнакан Артур Берикович Акопян 2008 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче илнĕ «В», «С» категорисемпе çўреме ирĕк паракан водитель удостоверенине кăтартнă. Йĕрке хуралçисен çивĕч куçĕ ку суя удостоверени иккенне çийĕнчех асăрханă. Следстви вăхăтĕнче А. Акопян хăй йĕркене пăснине йышăнчĕ.

Пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче ку «ĕçпе» район сучĕн ларăвĕ иртрĕ. Суд суя удостоверенипе çўрекен водитель айăпне уçса пачĕ, ăна çакăншăн 15 пин тенкĕ штраф тўлеттерме приговор кăларчĕ.

Тивĕçсене пурнăçламасан

Ашшĕ-амăшĕсене ачисене саккунпа килĕштерсе пăхасси пирки хаçатсем урлă та, радио-телевидени те асăрхаттарсах тăрать, анчах хăшĕсем çав-çавах хăйсен тĕпренчĕкĕсем çине алă сулаççĕ. Кун пек чух вĕсене ирĕкрен хăтараççĕ-и?

И. СМЕЛОВА.

Йĕрке пăсакана та пĕрре, иккĕ асăрхаттарма пултараççĕ. Виççĕмĕшĕнче вара вĕсен йĕрке хуралçисем ирĕкрен хăтарнипе тĕл пулма тивет.

Çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче район сучĕ ашшĕн тивĕçĕсене çителĕклĕ пурнăçламан тата ачисем çине тăтăшах алă çĕкленĕ, 1996 çулта çуралнă ывăлне пĕрре мар вĕлерессипе хăратнă Николай Николаевич Маргинова унченхи условнăй майпа ирĕкрен хăтарнине пăрахăçласа пĕр çулталăк та пĕр уйăх ирĕкрен хăтарса колони-поселенире тытма приговор кăларчĕ.

Çакнашкал лару-тăруран пăрăнас тесен ашшĕ-амăшĕн хăйсен тивĕçне туллин пурнăçласси пирки манас марччĕ.

Вĕлерессипе хăратнă

Тепĕр çынна вĕлеретĕп тесе сăмахпа каланишĕн те ирĕкрен хăтараççĕ-и?

Телефонпа шăнкăравланинчен.

Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕнче тепĕр çынна вĕлерессипе хăратнине те преступлени тесе пăхаççĕ. Уншăн хăйĕн айăплавĕ те пур.

Кăçалхи кăрлач уйăхĕн 28-мĕшĕнче 6 сехет тĕлĕнче Юнкăри В. Илугин хуçалăхĕнче Кăпасра пурăнакан Алиев Оруч Асад-Оглы гражданин хăйсем хушшинчи килĕшў суккине пула сиксе тухнă хирĕç тăрура кил хуçине нумай çĕртен тапса-çапса пĕтернĕ. Çапла вара вăл РФ Уголовлă кодексĕн 116-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление тунă. Çавăн чухнех «паттăр» хăна В. Илугина вĕлерессипе хăратса РФ Уголовлă кодексĕн 119-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление тăвать.

Ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ку уголовнăй ĕçе район сучĕ пăхса тухрĕ. Приговор вара хайхискерне 8 уйăхлăха ирĕкрен хăтарма пулчĕ.